25-мĕш сул тухать. Ханĕ 20 пус.

1945 СЕНТЯБРЬ 8 ШАМАТКУН 174(6925)№

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

III-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана ăнăçлăн тултарар!

Германипе Японне вăрçăра парăнтарнă хыççăн пирĕн аслă Тăван çĕршывра мирлĕ аталану тапхăрĕ пуçланчĕ. Çак мирлĕ аталану тапхăрĕнче пирĕн нумай миллионлă совет халăхĕ умĕнче питех те пысăк задачăсем тăраççĕ. ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ Госплана наркоматсемпе тата союзлă республикăсемпе пĕрле халăх хуçалăхне аталантармалли, нимĕç захватчикĕсем аркатнă районсене юсаса ура çине тăратмалли пулăшăва хатĕрлемелле. Çак ыйтусене татса пăхнă чухне ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ Госплана наркоматсемпе тата союзлă республикăсемпе пĕрле халăх хуçалăхне аталантармалли, нимĕç оккупацине пула снен курнă хуласемпе ялсене пĕтĕмпех юсаса ура çине тăратмалла.

Çĕршыври çавăн пек пысăк задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме, паллах, пирĕн государствăна укçа-тенкĕ нумай кирлĕ пулать. Государствăна кирлĕ укçана халăх хуçалăхĕ — промышленноçпа транспорт, çĕрĕçĕпе суту-илу—ытларах парса тăраççĕ. Унăр пуçне государство бюджетне халăх обязательнăй йĕркепе тӳлекен тата хăй ирĕкĕпе хывакан укçа-тенкĕ те кĕрет.

Халăхран укçа-тенкĕ пухасси халĕ вырăнти партипе совет органĕсен пысăк та ответлă ĕçĕ пулса тăрать. Вĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăхăтран вăхăта мар, кашни кун ытти ĕçсемпе пĕр вăхăтрах, туса пыма тивĕçлĕ. Вĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçре финанс работникĕсене тимлĕн пулăшса тăма тивĕçлĕ.

Ĕçе çакăн пек организацииленĕ тата укçа-тенкĕ пухассипе тăтăшах интересленнĕ çĕрте финанс планне кварталтан квартала ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Тĕслĕхрен, Çĕрпӳ районĕ ялхуçалăх енĕпе начар мар ĕçлет. Çав вăхăтрах кунти работниксем укçа-тенкĕ пухас ĕçе те тивĕçлипе хаклаççĕ. Вĕсем тырпул пухса кĕртес, государствăна тырă леçес тата налог парăмĕсене пухас ĕçсене пĕр вăхăтрах тата пĕр пек ăнăçлăхпа туса пыма пĕлеççĕ. Çавăнпа кунта укçа-тенкĕ пухас ĕç ниçан та юлса пымасть. Çĕрпӳ районĕ III-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 87 процент тултарнă. Уйрăмăн илсен, вăрçă вăхăтĕнчи налог укçине, государство страхованийĕн укçине тата перекет кассисем енĕпе пухмалли укçана планпа палăртнинчен ытларах пухнă.

Кунта укçа-тенкĕ пухас плана пĕтĕмĕшпе кăна мар, кашни тӳлев, кашни ял Совечĕ тăрăх тултарассишĕн кĕрешеççĕ. Çавăнпа районри чылай ял Совечĕсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе ăнăçлăн ĕçлеççĕ. Юлаш, Уйкас тата ытти ял Совечĕсем III-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана август уйăхĕнчех тултарнă. Вăл ял Совечĕсем халĕ мĕнпур парăмсене пухса çитерессишĕн кĕрешеççĕ.

Çĕрпӳ районĕнчи финанс работникĕсем (райфо заведующийĕ Петров юлташ, районри перекет кассин заведующийĕ Флегентов юлташ, старшин страхинспектор Панин юлташ) ку тараччен туна ĕçсемпе лăпланса ларма шутламаççĕ. Вĕсем аслă Сталин халăха чĕнсе калани çине ответлесе, III-мĕш кварталти финанс планне сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне тултарма, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне вара мĕнпур тӳлевсем енĕпе тултарма сăмах панă.

Курăнать ĕнтĕ, Çĕрпӳ районĕнчи финанс работникĕсем Чăваш АССР Совнаркомĕн кусса сӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Муркаш районĕнчен туртса плессишĕн чăнласах кĕрешеççĕ. Хальхи пекех тимлĕн ĕçлесен, малашне ĕçе сӳрĕклетмесен, вĕсем кусса сӳрекен Хĕрлĕ Ялава илесçе шанма пулать.

Республикăри ытти районсен укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Çĕрпӳ районĕнчен пример илсе ĕçлемелле. Укçа-тенкĕ пухас ĕçе ытти васкавлă пысăк ĕçсемпе пĕр харăсах туса пымалла.

Хальхи III-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Чăваш АССР Совнаркомĕн кусса сӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хальхи вăхăтра тытакан Муркаш районĕ, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Куславкка районĕсем, Шупашкар хули начар мар ĕçлеççĕ.

Анчах та йĕркеллĕ ĕçлекен хăшпĕр районсен шучĕпе кăна республикăра укçа-тенкĕ пухмалли плана ăнăçлăн тултарма çук. Плана пĕтĕм республикипе тата пур тӳлевсем енĕпе те тултарас тесен, укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе кашни район тăрăшса ĕçлени кирлĕ. Çакна вара чылай районсен руководителĕсем, финанс работникĕсем тата партипе совет активĕсем манаççĕ. Вĕсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе вăхăтран вăхăта, сӳлтен кăтарту панă самантра кăна ĕçлеме хăнăхнă. Иртсе пыракан квартал вĕçĕнче ĕçе тытăннă пек пулаççĕ те, çĕнĕ квартала кĕрсен укçа-тенкĕ пухасси çинчен манас каяççĕ. Вĕсен ĕçри стилĕ çакăн пек: пĕрре—лăпланса ларaççĕ, тепре—сӳлтен кăтарту парсан, вăранаççĕ, штурмлама тытăнаççĕ. Çакăн пек хăтланни вара ĕçре ӳсĕм тума пулăшмасть.

Çавăн пек юрăхсăр мелсемпе ĕçленĕ пирки ĕнтĕ Сĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Куваккино, Чкаловски, Шупашкар, Комсомольски, Советски тата Первомайски районсем укçа-тенкĕ пухас ĕçре пĕрмаях юлса пыраççĕ. Асăннă районсенчи финанс пайĕсен заведующийĕсем Мальцев, Тарасов, Калинкин, Игнатьев, Алексеев, Шутов Свешников тата Семенов юлташсем укçа-тенкĕ пухас ĕçре большевикла майсемпе ĕçлеме вĕренсе çитмен. Çак районсенчи финанс пайĕсен заведующийĕсем тырпул уйăран пухса кĕртнĕ вăхăтра уйăхĕ уйăхĕпе ял Советсемпе колхозсенче уполномоченнăйсем выраннĕнче пурăнаççĕ, вăл вăхăтрах вара хăйсен пĕрремĕш тивĕçĕ çинчен — укçа-тенкĕ пухас ĕç çинчен манаççĕ.

Çакăн пек çитменлĕхе Комсомольски районра лайăх курма пулать. Ку районри финанс пайĕн заведующийĕ Шутов юлташ, перекет кассин заведующийĕ Степанова юлташ колхозсенче пĕрмаях уполномоченнăйсем выраннĕнче пурăнаççĕ, ВКП(б) райкомĕ те вĕсене хăйсен ĕçĕпе ĕçлеттерме тăрăшмасть.

Комсомольски районра укçа-тенкĕ пухас ĕç юлса пынă пирки Чăваш АССР Совнаркомĕ унти райсовет исполкомĕн председательне Молодцов юлташа ятарласа хăйĕн ларăвне чĕнсе итлерĕ. Ун чухне Совнарком финанс работникĕсене хăйсен ĕçĕнчен тăтăшах уйăрса тĕрĕс мар тунă тесе Молодцов юлташа çирĕппĕн кăтартса хăварчĕ. Анчах та Комсомольски районра çакăнтан тивĕçлĕ вывод туман. Унтанпа çур уйăх ытла иртрĕ пулин те, ку районра укçа-тенкĕ пухас ĕçре улшăну çукха. Комсомольски район III-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана 20 процент ытларах кăна тултарнă.

Çак кварталта укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Шăмăршă, Пăрачкав, Вăрнар, Улатăр, Елчĕк тата Калинино районĕсем те çитĕлĕкĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем кварталти плана 30—40 процент çеç тултарнă.

Юлашкинчен çавна палăртса хăвармалла: Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕн работникĕсем хăйсем те республикăра укçа-тенкĕ пухас ĕçе çитĕлĕкĕр ертсе пыраççĕ. Наркомат руководителĕсем Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва районсенчи финанс работникĕсем хушшинче çитĕлĕкĕр саралаççĕ, ăмăрту результачĕсене çийĕнче тĕрĕслесе тăмаççĕ, малта пыракан финанс работникĕсен ĕç опычĕпе туллин усă курмаççĕ:

Сентябрь — III-мĕш кварталăн юлашки уйăхĕ, вăл çак кварталта укçа-тенкĕ пухас ĕçĕн ăнăçлăхне татса парать. Японни агрессорне çĕнтернĕ хыççăн, Пĕтĕм тĕнчипех вăрçă чарăннă ятпа Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ халăха чĕнсе калани çине ответлесе, çак кварталти укçа-тенкĕ пухмалли плана пĕтĕмпех тултарар!

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕ Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патĕнче Румыни премьер-министрĕ П. Гроза господин тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Г. Татареску господин ячĕпе ирхи апатлану пулса иртнĕ

Сентябрĕн 6-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕ Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патĕнче Румыни премьер-министрĕ П. Гроза господин тата вице-премьер, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Г. Татареску господин ячĕпе ирхи апатлану пулса иртнĕ. Вĕсемсĕр пуçне апатланура тата çаксем пулнă: сул-йĕрсен тата обществăллă ĕçсен министрĕ Георгиу Деж господин, Сутĕç министрĕ Ш. Войтек господин, Румынин Совет Союзĕнчи посолĕ И. Иордан господин, перемири условийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлекен комисси председателĕ М. Гельмеджапу господин тата М. Солокалу, Б. Шкипу, М. Вабеш господинсем пулнă.

Совет Союзĕ енчен çаксем пулнă: СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Пред. седатель Заместителĕ Тулашри Сутуплӳ Халăх Комиссарĕ А. И. Микоян, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕсем А. Я. Вышинскипе В. Г. Декановзов, Совет Союзĕн Румынири посолĕ С. И. Кавтарадзе, союзниксен Румынири контроль комиссийĕн председателĕн заместителĕ генерал-полковник И. З. Сусайков, СССР Наркоминделĕн отдел сотрудникĕсем А. П. Павлов, А. А. Лаврищев, Н. Н. Яцкевич.

Апатлану туслăн иртнĕ.

Совет Союзĕн Геройĕ инженери çарĕсен генерал-майорĕ А. П. Петров Шупашкарта

Виçĕмкун Шупашкара пирĕн халăхăн чапа кĕвĕлĕ Совет Союзĕн Геройĕ инженери çарĕсен генерал-майорĕ Антон Петрович Петров килчĕ. Вăл Шупашкарта республикăри партипе совет организацийĕсен руководителĕсемпе тĕл пулчĕ, журналистсемпе тата писательсемпе калаçрĕ, кунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра пулчĕ.

Шупашкара килничен Антон Петрович хăй çуралнă Ачакасси ялĕнче (Канаш районĕ) темиçе кун пурăннă.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президентне Трумэн господина

Япони парăнни çинчен калакан акта алă пуснă кун эпĕ Сире, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствине тата Америка халăхне Японие çĕнтерсе тунă аслă çĕнтерӳ ячĕпе ырă сунса салам яратăп.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен хĕç. пăталлă вăйĕсене чаплă çĕнтерӳ ячĕпе саламлатăп.

И. СТАЛИН.

1945 çулхи сентябрĕн 2-мĕшĕ.

Сталин генералиссимуса Трумэн президентран

Союзниксем пурте пĕр пулса Японие çĕнтернĕ ятпа Эсир саламласа янă кăмăллă çырушăн Сире Америка халăхĕ тата эпĕ хам çума суса тав тăватпăр.

Çав çĕнтерĕве тума союзниксем пурте кашни хăйĕн вăйĕ пур чухлĕ пулăшрĕç, халĕ ĕнтĕ эпир пурте мирлĕ пурнăç пуймăччен пырасса тата мире юратакан пур çĕршывсем те çĕнĕрен вăйланса пырасса шанса тăма пултаратпăр.

Г. ТРУМЭН.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

ГОСУДАРСТВО УНИВЕРСИТЕЧĔСЕНЧЕН ВĔРЕНСЕ ТУХНИСЕНЕ ВАЛЛИ КĂКĂР СИНЕ ÇАКСА СӲРЕМЕЛЛИ ЗНАЧОК ТАВАССИ ÇИНЧЕН

1. Государство университечĕсенчен вĕренсе тухнисене валли кăкăр çине çакса сӳремелли значок тăвас.

2. Государство университечĕсенчен вĕренсе тухнисене валли кăкăр çине çакса сӳремелли значокăн положенине тата вăл мĕнле пулмаллине çырса кăтартнине çирĕплетес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1945 çулхи сентябрĕн 4-мĕшĕ.

ГОСУДАРСТВО УНИВЕРСИТЕЧĔСЕНЧЕН ВĔРЕНСЕ ТУХНИСЕМ ВАЛЛИ КĂКĂР ÇИНЕ ÇАКСА СӲРЕМЕЛЛИ ЗНАЧОКАН ПОЛОЖЕНИЙĔ

1. Кăкăр çине çакса сӳремелли значока Государство университетĕнчен вĕренсе тухнă çынна параççĕ.

2. Кăкăр çине çакса сӳремелли значока Государство университечĕн курсне вĕренсе пĕтерни çинчен ĕнентерсе паракан дипломпа пĕрлех параççĕ.

Государство университечĕсенчен 1918—1945 çулсем хушшинче вĕренсе тухнă çынсен кăкăр çине çакса сӳремелли значока вĕсем хăйсем вĕренсе тухнă государство университечĕсем параççĕ.

3. Кăкăр çине çакса сӳремелли значока союзлă республикăн Сутĕç Халăх Комиссариачĕ ячĕпе университет ректорĕ парать.

4. Государство университечĕсенчен вĕренсе тухнисене валли кăкăр çине çакса сӳремелли значока сылтăм енче, СССР орденĕсемпе медалĕсенчен аяларах çакаççĕ.

ГОСУДАРСТВО УНИВЕРСИТЕЧĔСЕНЧЕН ВĔРЕНСЕ ТУХНИСЕНЕ ВАЛЛИ КĂКĂР СИНЕ ÇАКСА СӲРЕМЕЛЛИ ЗНАЧОК МĔНЛЕ ПУЛМАЛЛИНЕ ÇЫРСА КĂТАРТНИ

Государство университечĕсенчен вĕренсе тухнисене валли кăкăр çине çакса сӳремелли, значок—кăшт мăкăртарах, кăвак эмаль сăрланă ромб евĕрлĕ; ромб йĕрĕтавра шурă эмаль йĕр, çак шурă йĕрĕн хĕррисене ылттăнпа сăрланă. Варринче, кăвак эмаль çинче ылттăнпа сăрланă Совет Союзĕн гербĕ пур. Значока кĕмĕлтен тăваççĕ.

Значокăн пысăкăшĕ: сӳлтен аялалла—46 миллиметр, сарлакăшĕ—26 миллиметр.

Значокăн тепĕр енче значока тумтир çумне çаклатса лартмалли булавка пур.

10 ача амăшĕ—Ксения Егоровна Кошелева

Çак кунсенче пирĕн республикăри «Ача амăшĕ-героиньăсен» шутне тата тепĕр героиня хутшăнчĕ. СССР Верховный Совет Президиумĕ пирĕн республикăри 10 ача амăшне—Ксения Егоровна Кошелева юлташа «Ача амăшĕ-героиня» ятне парса, «Ача амăшĕ-героиня» орденпа тата СССР Верховный Совет Президиумĕн грамотипе наградăларĕ.

Ксения Егоровна Кошелева Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Митеркасси ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вăл Тăван çĕршыва 2 хĕр тата 8 ывăл пăхса çитĕнтерсе панă. Унăн 5 ывăлĕ: Михаил, Федор, Николай, Алексей, Семен пурте Хĕрлĕ Çар ретĕнче. Иринăпа Матрена хĕрачисем «Пятилетка» колхозра ĕçлеççĕ. Степан, Алексей тата Александр шкулта вĕренеççĕ.

Кошелева юлташ 57 çулта ĕнтĕ, анчах çапах та вăл колхозра тăрăшса ĕçлет.

Ксения Егоровна Кошелевăна çак ячăлă та мухтавлă ята илнĕ май, хĕрӳллĕн саламлатпăр, ăна çирĕн сывлăхпа ырă кунсем сунатпăр.

5 сентябрь

Тĕштырăсене вырса пĕтермелли вунăкунлăх

15 сентябрь

„Зерно“ колхоз малта пырать

КӲКЕÇ, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). «Зерно» колхозра пур ĕçе те уйрăм сдельщинăпа тăваççĕ, çавна пула кунта ĕç тухăçлăхĕ те пысăк. Кунта кулленхи нормăна тултарайман çын çук. «Зерно» колхоз тĕштырăсене вырса пĕтермелли вунăкунлăхăн пĕлĕнче пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши тырăсене вырса пĕтерчĕ. Николаевпа Васильев машинистсем жнейкасемпе кунĕн-çĕрĕн ĕçлесе кулленхи нормăна нумай пĕттерсе тултарса ĕçлерĕç.

«Путь Ленина» тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем тырă вырмалли, авăн çапмалли тата государствăна тырă памалли графика тултарса пыраймаççĕ. Çак колхозсенче столовăй тата ача ясли туман. Çавна пула нумай колхозниксемпе колхозницăсем ĕçе кая юлса тухаççĕ, ĕçрен пĕр тавраннаççĕ.

А. ТИМОФЕЕВ.

КУННЕ 10 ГЕКТАР ВЫРАССĔ

ПАРАЧКАВ, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). «Победа» колхоз районра чи малтан тĕштырăсемпе пăрça йышши тырăсене вырса пухнă. Вырнă тырра пĕтĕмпех тенĕ пек капана хывса пĕтерĕ. Уйрăмăнах Соколова юлташ ертсе пыракан бригада лайăх ĕçлет. Çак бригада тĕштырăсене вырассине ытти бригадăсенчен маларах вĕçленĕ. Çак бригадăри машинопед Лисицын юлташ жнейкăпа кунне 3 гектар вырăнне 8—10 гектар вырса пынă.

Халĕ колхоз авăн çапас тата государствăна тырă парас тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлет.

Тырра тăкăнма памалла мар

Вăрмар районĕнчи нумай колхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕç ăнăçлă пырать. «Свобода» колхоз (председателĕ Иванов юлташ) тĕштырăсене тата пăрça йышши культурăсене вырса пĕтернĕ, ыраш çанса та пĕтернĕ. Колхоз государствăна тырă памалли графика ытлашшипех тултарса пырать. Кӳршĕри Испенери колхоз юлса пынине кура, «Свобода» колхоз унта 50 çын тырă вырма янă.

«Красные Мураты» колхозра та колхозниксем хастарлă ĕçлеççĕ. Кунта тырă вырма ирхине 4 сехетлех тухаççĕ те, тĕттĕм пулсан тин ĕçрен кĕреççĕ. Çак колхоз районри колхозсене сортлă вăрлăх туса парать. «Красные Мураты» колхоза район центрĕнчен тырă тасатмалли «ВИМ-2» сортировкăна янă, анчах та колхоз председателĕ Данилов юлташ çак паха машинăна чылай вăхăт хушши ĕçсĕр лартнă.

Кавалти «Маяк» колхозра пăрça йышши тырăсем пулса çитнĕ тата тăкăнма та пуçланă, анчах та вĕссене çулма тытăнман.

Тĕштырăсене вырса пĕтермелли вунăкунлăха колхоз руководителĕсен ĕçе лайăх ертсе пымалла.

КАЛЧАСЕМ ТИКĔС ШАТСА ТУХНĂ

Вăрнар районĕнчи Уравăшри «Первое мая» колхоз кăçал планпа кĕрхи тырăсене 205 гектар акса хăварчĕ. Кĕрхи акапа вăхăтра тунине тата унта тухăçлă ĕçлесе пынине, колхоз çав лаптăка августăн 27-мĕшĕ тĕлнех акса пĕтерчĕ. Акасса пĕтĕмпех селькăсемпе ретĕн-ретĕн акса хăварнă. Халĕ ыраш калчисем пĕр тикĕс шăтса тухнă.

Колхозсем пĕр-пĕрне пулăшаççĕ

ЕЛЧĔК, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Тĕштырăсене вырса кĕртессине вĕçлемелли вунăкунлăхăн малтанхи кунĕнче 25 колхоз тырă вырса пĕтерчĕç. Çав колхозсем халĕ кĕлтене капана хывма тата авăн çапас енĕпе хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ. Анчах та районра тырпул пухса кĕртес тĕлĕшпе юлса пыракан колхозсем те пур.

Вунăкунлăхра ĕçе организацилеме кашни колхозах ВКП(б) райкомĕпе райисполкомăн уполномоченнăйĕсене ятăмăр. Вĕсем тĕштырăсене пухса кĕртмелли вунăкунлăх задачисем çинчен колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса параççĕ тата колхоз председателĕсене тырпул пухса кĕртес ĕçре пулăшаççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вĕçленни çинчен Сталин юлташ радиопа туха калана май кашни колхозрах колхозниксем ĕçленĕ çĕртех пухусемпе митингсем пулса иртрĕç. Малта пыракан колхозсем юлса пыракан колхозсене ĕç тата туртăм вăйĕ ярса пулăшма йышăнаççĕ. «Осоавиахим» колхоз «Красные Темяши» колхоза 6 лаша, 2 жнейка, 25 çын тырă вырма ячĕ. Вĕсем вунăкунлăхăн малтанхи кунĕсенчех 30 гектар ытла вырса панă. «Осоавиахим» колхозăн пуçарăвне ытти колхозсем те кăмăллăн йышăнса илчĕç. «Путь Ленина» колхоз хăйĕн машинисемпе тата çынсемпе «Канаш» колхоза 60 гектар ытла вырса пама йышăнна. «Красный восток» колхоз «Кăвал элем» колхоза 25 гектар вырса парать. «Молот» колхоз «Вторая пятилетка» колхоза пулăшас майпа 4 жнейка, туртăм тата ĕç вăйĕ янă. Çакăн пек тĕслĕхсем ытти колхозсенче те пур. Çав колхозсем халĕ хăйсем илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Зайпев юлташ) Курнавăшри «Автогигант» колхоза 4 жнейка тата вĕсемпе ĕçлеме çынсем ярать.

И. АЛЕКСАНДРОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Тырпула пĕр тăкăнламасăр вырса пĕтерчĕç

ШАХАСАН, Чăрăшкассинчи «Ăмăрту» колхоз кăçал тырпул пухса кĕртес тĕлĕшпе районра чапа тухрĕ. Ку колхозра уя тырă вырма тухичченех колхозниксене уйăрмалла, вĕсене туртăм вăйĕ, плуг тата ытти пивентарьсем уйăрса памалла.

Кĕрхи çĕртме тумалли плана шута илсе, кашни сухаçăна е тракториста кулленхи заданисем памалла.

Тракторпа сухалама чухне 18—20 сантиметр тарăнăш, лашапа е ĕнепе 14—16 сантиметр тарăнăш сухаламалла.

ВЛКСМ райкомĕсемпе районри çĕрĕç пайĕсем çамрăксен вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен звенисене çирĕплетесси тата вĕсене çĕнĕрен тăвасси çинче лайăхрах çаврăнса пăхма тивĕçлĕ, çак звеносене хăйсене уйăрса панă участоксенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе явăçтармалла. Çав звеносене кĕркунне тумалла, мĕншĕн тесен тухăçлă тырпулшăн кĕрешеси кĕркунне пуçланать.

ВЛКСМ райкомĕсемпе комсомолăн пуçламăш организацийĕсем ĕнесемпе кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе пуçарса яраканĕсем пулмалла.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре çамрăк сухаçăсемпе трактористсен республикăри социализмлă ăмăртăвне пуçарса яма йышăннă. Кĕрхи çĕртме тумалли сезонра икĕ касăллă плугпа 32 гектартан, пĕр касăллă плугпа 20 гектартан, трактористсем: СХТЗ трактор-на 80 гектартан, СТЗ-НАТИ тракторпа 130 гектартан, ХТЗ Т2Г тракторпа 110 гектартан, ЧТЗ-С-60 тракторпа 160 гектартан, У-2 тракторпа 50 гектартан кая мар сухалакансене социализмлă ăмăртура мала тухнă тесе шутласçĕ. Çав вăхăтрах ĕçĕ пахалăхĕ лайăх пулмалла, агротехни. кăна пăхăнса пымалла, тракторсемпе туртăм вăйне лайăх сыхласа хăвармалла.

Ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартса ăмăртура мала тухнă çамрăк сухаçăсемпе трактористсене «Районри чи лайăх çамрăк сухаçă» тата «Районри чи лайăх тракторист» ятне тата ВЛКСМ райкомĕпе районри çĕрĕç пайĕн хисеплĕ грамотисем памалла тунă.

Республикăри ăмăртура мала тухнисене çакăн пек премисем пама йышăннă:

пĕрремĕш премисем вуннă, кашниех 500-шер тенкĕ;

иккĕмĕш премисем вуннă, кашниех 250-шар тенкĕ;

Виçĕ пĕрремĕш премине тата тăватă иккĕмĕш премине çĕртме тăвас ĕçе лайăх организацилеме райкомăн е комсомолăн пуçламăш организацийĕн секретарĕсем параççĕ.

Ăмăртăван итогĕсене районсен ВЛКСМ Обкомĕпе Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарнатне октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне тăратмалла.

СЕНТЯБРĔН 5-МĔШĔ ТĔЛНЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕС ТАТА КĔРХИ ТЫРĂСЕНЕ АКАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă вырмалли	Авăн çапмалли	Кĕрхи тырăсем акнă
Вăрнар	94,6	41,0	37,5	100,3
Советски	92,9	39,8	26,6	105,2
Етĕрне	91,2	42,2	27,9	100,1
Красноармейски	91,1	52,1	40,8	100,3
Вăрмар	87,7	47,0	39,2	98,0
Сĕнтĕрвăрри	87,4	53,6	43,1	98,0
Чурачăк	87,1	53,3	41,1	101,8
Çĕрпӳ	86,4	46,7	37,7	100,1
Чкаловски	86,1	52,0	32,1	83,3
Калинино	84,3	57,7	32,4	100,1
Тăвай	84,3	42,8	38,3	82,3
Хĕрлĕ Чутай	83,0	36,2	30,1	85,7
Елчĕк	82,9	43,2	29,8	99,2
Сĕнтĕр	82,4	42,3	34,9	101,4
Шăхасан	82,1	49,8	40,3	99,1
Октябрьски	80,8	61,5	49,5	99,5
Ишлей	80,4	45,5	38,7	100,0
Шупашкар	79,9	57,0	51,7	100,2
Шăмăршă	79,8	60,8	44,6	71,4
Элĕк	79,6	49,0	36,6	100,1
Куславкка	79,5	50,8	42,3	80,0
Канаш	78,4	53,5	45,3	91,0
Первомайски	78,0	43,9	37,6	84,8
Муркаш	75,0	51,5	41,4	95,9
Пăрачкав	74,8	51,4	36,0	50,2
Комсомольски	72,5	48,2	41,0	84,1
Йĕпреç	72,5	43,7	37,9	82,4
Сĕмĕрле	68,1	53,0	33,6	86,2
Улатăр	64,8	47,6	40,3	53,6
Куваккино	55,0	43,4	41,4	64,8

Тăван çĕршыв вăй-хăвачĕшĕн

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Японни пĕр сăмахсăр парăнни, хĕвелтухăçĕнчи вăрçă вучахĕ пĕтсе ларни çинчен калакан хыпара тата И. В. Сталин юлташ халăха чĕнсе каланине районри ĕççыннисем хаваслăн кĕтсе илчĕç. Сталин юлташ чĕнса каланине агитаторсем колхозниксене ăнлантарса параççĕ. Халĕ аслă çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăрту колхозсенче çĕнĕрен сарăлса кайрĕ.

Çак кунсенче районри 23 колхоз тĕштырăсене вырса пĕтерчĕ. Вăл шутра Анаткас Хапăсри Чапаев ячĕпе, Чкалов ячĕпе, Ворошилов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те пур. Çак колхозсенче халĕ государствăна тырă парас, кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕçсем хĕрӳллĕн пыраççĕ. Тырă вырса пĕтермен колхозсем тĕштырăсене пухса кĕртес ĕçе вĕçлемелли вунăкунлăха хутшăнса тĕштырăсене çак кунсенчех вырса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ.

Çĕнтерӳ кунĕнче—сентябрĕн 3-мĕшĕнче тата ун хыççăнхи кунсенче нумай колхозсем хатĕрлев пунктне 1000-мĕр пăт тырă лесрĕç. Çапла Хурнсурти Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 127,7 пентнер тырă леснĕ. Çĕнтерӳ кунĕнче районра колхозсем пĕтĕмпе 693,5 пентнер, сентябрĕн 4-мĕшĕнче вара 1190 пентнер тырă панă.

Государствăна тырă парас тĕлĕшпе «Победа», Ленин ячĕпе тăракан колхозсем лайăх ĕçлеççĕ, вĕсем пилĕккунлăх заданисене пĕттерсе тултараççĕ.

Вăрнарти хатĕрлев пунктне çавăн пекех Калинино, Элĕк, Красноармейски, Шăхасан районĕсенчи колхозсенчен те кулленех хĕрлĕ обозсем ĕнлăн килсе тăраççĕ.

Е. ВОЛКОВ.

Чăваш АССР прокуратуринче

Государствăна тырă памалли графика пурнăçласа пыманшăн Элĕк районĕнчи «Безбожник» колхозăн председательне Н. С. Силина, çак районри «Красная Армия» колхозăн председательне С. Т. Тимофеева тата Шăхасан районĕнчи «Молодой колхозник» колхозăн председательне П. С. Сильвестрова хупса лартнă, вĕсене суда параççĕ.

Çамрăксене ФЗО шкулĕсене, ремеслапа чугун çул училищисене вĕренме илесси çинчен

(СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Ĕç резервĕсен Главнăй управленийĕн начальникĕпе П. Г. Москатов юлташпа калаçни)

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ государствăн ĕç резервĕсен училищисемпе шкулĕсене вĕренме илесси çинчен постановлени йышăннă. ФЗО шкулĕсене, ремеслапа чугун çул училищисене çĕнĕрен 455 пин ачана (арçын ачасемпе хĕрачасене) вĕренме илеççĕ.

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Ĕç резервĕсен Главнăй управленийĕн начальникĕ П. Г. Маскатов юлташ ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла пĕлтернĕ:

— ФЗО шкулĕсенче массăллă профессиллĕ рабочисене, ремеслапа чугун çул училищисенче—квалификациллĕ рабочисене хатĕрлес ĕçе партипе правительство пысăк вырăна хураççĕ. Çамрăксене çитес чеpетре вĕренме илесси аслă Отечественнăй вăрçă çĕнтерӳллĕн вĕçленнĕ хыççăн пулать.

Правительство йышăннă тăрăх, СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Ĕç вăйĕсене шута илес тата валеçес тĕлĕшпе ĕçлекен комитет, крайсемпе облаççенчи Советсен исполкомĕсем, союзла тата автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсем çамрăксене вĕренме илме (мобилизацилеме) тивĕçлĕ. Ĕç резервĕсен Главнăй управленийĕ ФЗО шкулĕсене—300 пин çын, ремеслапа чугун çул училищисене—155 пин çын йышăнмалла. 1945 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕпе октябрĕн 15-мĕшĕ хушшинче—хулари çамрăксене, октябрĕн 15-мĕшĕпе ноябрĕн 15-мĕшĕ хушшинче—ялти çамрăксене вĕренме илеççĕ.

ФЗО шкулĕсене 16—17 çулхи арçын ачасемпе 16—18 çулхи хĕрачасене, ремесла чугун çул училищисене—14—15 çулхи арçын ачасемпе 15—16 çулхи хĕрачасене илмелле. Кăмрăк, сăрт-ту, металлурги промышленноçĕсен тата строительство ĕçĕн ФЗО шкулĕсене 17 çула çитнĕ арçын ачасене кăна илеççĕ. Сăрт-ту тата металлурги промышленноçĕсен ремесла училищисене, поездсене илсе çӳрессипе çыхăннă пробессисене вĕрентекен чугун çул училищисене 15 çула çитнĕ арçын ачасене кăна илеççĕ. Вĕренме илекенсене пурне те медицина енчен пăхмалла.

Училищесемпе шкулсене чи малтан ĕçлемен тата вĕренмен çамрăксене илмелле. Питех кирлĕ пулсан, Наркомпроспа НКПС шкулĕсенче вĕренекенсене те илме нрĕк панă, анчах та 8-мĕш, 9-мĕш тата 10-мĕш классенче вĕренекенсене илмелле мар.

Çамрăксене вĕренме илес тĕлĕшпе хуласемпе район центрĕсенче комиссисем тумалла, çав комиссисене ĕççыннин депутачĕсен вырăнти Советсен исполкомĕсен председателĕсем ертсе пымалла. СССР Совнаркомĕ çамрăксене вĕренме вăхăтра тата организованнă илес, вĕсене вĕренмелли вырăна çитерес тĕлĕшпе ответлăха облаççемпе крайсенчи исполкомсен, союзлă тата автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсен председателĕсем çине хунă.

ФЗО шкулĕсене, ремеслапа чугун çул училищисене вĕренме мобилизацилеnĕ çамрăксене, çавăн пекех тата хăйсен прĕкĕпе вĕренме кĕрекен çамрăксене тумтир, урана тăхăнмалли япаласем, кĕпейĕм тата çул çине апат-çимĕç парса ямалла. Çав япаласене колхоз çамрăкĕсене—колхоз шучĕпе, ача çурчĕсенчи воспитанниксене—Наркомпрос организĕсен шучĕпе, ытти çамрăксене—ашшĕ-амăшĕ шучĕпе илсе памалла.

Иртнĕ çулхи опыт совет çамрăкĕсем ремесла училищисемпе ФЗО шкулĕсене вĕренме хаваслăн кайнине кăтартса паччĕ. Вĕсем унта производствăллă квалификаци туянаççĕ. Эпир пăхса ӳстернĕ çамрăксенчен чылайăшне стахановла ĕçленĕшĕн орденсемпе тата медальсемпе наградăланă, бригадирсемпе мастерсем пулса ĕçлеме куçарнă, чылайăшĕ смена начальникĕсем пулса ĕçлеççĕ. Ремеслапа чугун çул училищисенче тата ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсене вĕреннĕ вăхăтра мĕн кирлине пурне те государство парса тăрать. Вĕсене апат-çимĕç, тумтир, урана тăхăнмаллисем тата кĕпе-йĕм параççĕ.

Урăх вырăнтан вĕренме пынисем валли общежити пулать. Шкулсемпе училищăсенче тӳлевсĕрех вĕрентеççĕ.

Çамрăксене вĕренме илессине организованнă ирттерес тесен, вĕренме кĕрекенсене училищесемпе шкулсен тата ĕç резервĕсен задачисемпе, вĕренекенсен пурнăçĕпе тата йăлипе паллаштармалла. Училищесемпе ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсемпе вĕренме кĕрекен çамрăксене пер-пĕринпе тĕл пулса калаçтараççине пур çĕрте те ирттермелле.

ФЗО шкулĕсен, ремеслапа чугун çул училищисен çĕнĕ вĕренекенсене илме малтанах тĕплĕн хатĕрленмелле. Вĕрентӳпе производство çурчĕсене, общежитисене, столовăйсене юсамалла. Çуртйĕрсене юсас тата унта мĕн кирлисене тупса парас ĕçре училищесемпе ФЗО шкулĕсене тытакан предприятисен пысăк пулăшу памалла.

Çĕнĕрен вĕренме кĕрекен çамрăксене училищĕсемпе ФЗО шкулĕсен работникĕсем ăшшăн та кăмăллăн кĕтсе илеç. Вĕренӳ занятийĕсене вăхăтра пуçламалла, ФЗО шкулĕсемпе училищесене çĕнĕрен илнĕ вĕренекенсене пурне те çирĕплетсе хăвармалла, ĕç резервĕсĕн воспитанникĕсене ĕçе вĕрентессине тата вĕсене культурăпа йăла тĕлĕшĕнчен пулăшса тăрассине малашне лайăхлатса цымалла.

Вырăнти совет хуçалăх, комсомол, профсоюз организацийĕсем активлă хутшăнса пулăшса пынипе, ФЗО шкулĕсене, ремеслапа чугун çул училищисене вĕренме илессине организованно тата СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă срокра ирттерес пирки пккĕленмелли çук.

(ТАСС).

ВЦСПС С-ра

ÇАМРĂКСЕНЕ РЕМЕСЛАПА ЧУГУН ÇУЛ УЧИЛИЩИСЕНЕ, ФЗО ШКУЛĔСЕНЕ ВĔРЕНМЕ ИЛЕС (МОБИЛИЗАЦИЛЕС) ĔÇЕ ПРОФСОЮЗ ОРГАНИЗАЦИЙĔСЕМ ХУТШĂНАССИ ÇИНЧЕН

1945 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕпе ноябрĕн 15-мĕшĕ хушшинче хуласемпе ялсенчи çамрăксене ремесло тата чугун çул училищисене, фабрикăпа завод ĕçне вĕренмелли шкулсене вĕренме илес (мобилизацилес) ĕç пулса иртет. ВЦСПС секретарĕнче профсоюз организацийĕсене çак мероприятие ирттерес ĕçре ĕççыннин депутачĕсен Совечĕсен исполнительнăй комитечĕсемпе ĕç резервĕсен управленийĕсене пур енчен те пулăшма хушнă. Вĕренме илекен çамрăксем валли мĕнпур вĕрентӳпе производство тата культурăпа йăла условийĕсем туса памалла.

Халăх хуçалăхĕ валли квалификациллĕ рабочисем тата массăллă профессиллĕ рабочисем хатĕрлесе парас ĕçре государствăн ĕç резервĕ мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен профсоюзсем ăнлантарса пама тивĕçлĕ. Вĕренме илес тĕлĕшпе ĕçлекен хуласемпе районсенчи комиссисене профсоюз организацийĕсен представителĕсене уйăраççĕ. Профсоюзсем ĕç резервĕсен управленийĕсемпе пĕрле шкулсемпе училищесем вĕренме пыракан çамрăксене йышăнма мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухмалла. Юсав ĕçĕсем, общежитисенче, вĕренӳ çурчĕсенче тата столовăйсенче кирлĕ япаласене тупса парас, топливо кӳрсе килес ĕç çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

Профсоюз организацийĕсен ремеслапа чугун çул училищисене, ФЗО шкулĕсене вĕренме илнĕ çамрăксем валли клубсенче, культура çурчĕсемпе библиотекăсенче мĕн кирлине пурне те туса памалла, вĕренекенсем апатланакан столовăйсене тĕрĕслесе тăрассине вăйлатмалла. Медицинăпа санитари работникĕсен профсоюзĕн Центральный Комитетне вĕренме илес тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисене çамрăксене медицина енĕпе пăхассине организацилес тата вĕренекенсене медицина енчен пăхса тăрас ĕçре пулăшма хушнă. Чугун çулпа шыв çул транспортĕнчи рабочисен профсоюзĕн Центральный Комитетне—вĕренекаякан çамрăксене туртăрма кирлĕ ваконсемпе суднăсене вăхăтра парса тăнине пăхса тăма хушнă.

Çĕвĕ çĕлекен промышленность рабочийĕсен профсоюзĕн Центральный Комитетне—вĕренекенсем валли ĕçре тата тухса çӳренĕ чух тăхăнма кирлĕ тумтире мĕнле çĕлесе панине сăнаса тăма хушнă.

(ТАСС).

ВЛКСМ Центральный Комитетĕнче

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ «Çамрăксене ремеслапа чугун çул училищисене тата ФЗО шкулĕсене илес (мобилизацилес) ĕçе хатĕрленсе иртнĕ çĕрте комсомол организацийĕсем хутшăнасси çинчен» постановлени йышăннă.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомол обкомĕсемпе крайкомĕсене, комсомолăн союзлă республикăсенчи Центральный Комитечĕсене çамрăксене ремеслапа чугун çул училищисене тата ФЗО шкулĕсене илес (мобилизацилессине) туса иртнине ĕçе комсомол организацийĕсем активлăн хутшăнтарма хушнă. Çав ĕçе туса иртнĕ чухне массăллă-политикăллă ĕçе анлăн сарасси çине тата училищесемпе ФЗО шкулĕсене çĕнĕ çынсем илме вăхăтра хатĕрлесе çитересси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ хула комитечĕсене, обкомсемпе крайкомсене, комсомолăн союзлă республикăсенчи Центральный Комитечĕсене ĕç резервĕсен Управленийĕпе пĕрле çамрăксене училищесемпе ФЗО шкулĕсене вĕренме илекен ĕçĕн политикăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи пĕлтерĕшне ăнлантарса парассине организацилеме, çамрăксене ремеслапа чугун çул училищисен тата ФЗО шкулĕсен ĕçĕпе тата пурнăçĕпе анлăн паллаштарма хушнă. Çав шутпа çамрăксемпе ашшĕ-амăшĕсем хушшинче государствăн ĕç резервĕсем çинчен докладсемпе калаçусем ирттерме, çамрăксем валли ятарласа радиопередачăсем оргнизацилеме, призыв ирттерекен колхозсемпе рабочи поселоксене активистсомсомолецсенчен, училищесемпе ФЗО шкулĕсенчи работниксенчен, вĕренекен отличниксенчен, ĕç резервĕсен шкулĕсене вĕренсе пĕтернĕ çамрăк рабочисенчен агитаторсен бригадисене яма сĕннĕ.

Комсомол организацийĕсен училищесемпе ФЗО шкулĕсене вĕренме илме тивĕçлĕ çамрăксемпе çав училищесенче тата шкулсенче вĕренекенсен, вĕсен руководителĕсен тĕлпулăвĕсене организацилемелле, çамрăксене училищесемпе шкулсенчи мастерскойсемпе, вĕренӳ кабинечĕсемпе, общежитисемпе паллаштармалла. çамрăк рабочисем шкулсемпе училищесенче мĕнле профессисем, мĕнле специальноçсем илесси çинчен каласа кăтартмалла, художествăллă пултарулăх вечерĕсем, вĕренекенсен ĕçĕсене кăтартакан выставкăсем туса ирттермелле.

Комсомол райкомĕсемпе горкомĕсен, обкомĕсемпе крайкомĕсен тата комсомолăн союзлă республикăсенчи Центральный Комитечĕсен училищесемпе шкулсене çĕнĕрен вĕренме илессине организованно туса ирттерме пулăшмалла. Çĕнĕрен вĕренме илнĕ çамрăксемпе пухусем туса ирттермелле, вĕсене заводсем тăрăх, хула тăрăх экскурсие илсе каймалла, театрсемпе музейсене илсе çӳремелле, предприятисенчи кадрта тăракан рабочисемпе, Отечественнăй аслă вăрçă участникĕсемпе тĕлпултармалла.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ обкомсемпе, крайкомсене, комсомолăн союзлă республикăсенчи Центральный Комитечĕсене училищесемпе шкулсене вĕренме илес ĕçре пулăшма комсомол райкомĕсемпе горкомĕсене комсомолăн ертсе пыракан работникĕсене яма хушнă.

Çамрăксен хаçачĕсен редакцийĕсене училищесемпе шкулсене вĕренме илесси (мобилизацилесси) мĕнле пынине тата çав ĕçе комсомол организацийĕсем мĕнле хутшăнса ĕçленине тăтăшах çутатса пымa хушнă.

Чăваш çамрăкĕсене техникăна вĕрентер

Юлашки çулсенче пирĕн Чăваш республикинче çĕнĕ предприятисем йышлăн ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсен шутĕнче электричество ĕçĕн аппарачĕсемпе приборĕсене туса кăларакан заводсем те пур. Мирлĕ пурнăç тапхăрĕнче çав заводсем, паллах, малалла аталанса пымалла. Çавăнпа та унта ĕçлеме çирĕп пĕлӳ илнĕ техниксем пумай кирлĕ пулаççĕ.

Çак тĕлĕшпе Шупашкарта электромеханически техникум уçнă. (Вăл Карл Маркс урамĕнчи 82-мĕш çуртра вырнаçнă). Техникум электроаппаратсем тăвакан техник-электриксене тата металла шăратмасăр уса кураканн техник-технологсене хатĕрлет.

Çак кадрсене ăнăçлăн хатĕрлеме техникумăн условисем çителĕклĕ. Техникум çурчĕ лайăх, вĕренекенсем валли общежити пур. Электротехнически лабораторипе вĕренӳ мастерскойĕсем ĕçлеççĕ. Вĕрентекенсем çителĕклĕ, вĕсем хăйсен ĕçне лайăх пĕлеççĕ. Электропромышленность наркомачĕпе Чăваш республикинчи организацисем, техникума тивĕçлĕпе хакласа, ĕçре яланах пулăшса тăраççĕ.

Çак уйăхăн 17-мĕш кунĕнчен пуçласа техникумра вĕренӳ заянтийĕсем пуçланаççĕ. Чăваш республикинчи çамрăксене техникума вĕренме кĕрсе, электропромышленность предприятийĕсенче ĕçлекенсем пулса тухма чĕнетпĕр.

1942 çулхи военнăй заем вылявĕ

Сентябрĕн 8-мĕшĕнче 1942 çулхи государственнăй военнăй заемăн уллăмĕш вылявĕ пуçланать. Вылявра пĕтĕмпе 1.017.750 выигрыш пулать, мĕнпурĕ 271.565.200 тенкĕлĕх: Вăл шутра 50-шар пин тенкĕлĕххисем—118 выигрыш. 25-шер пин тенкĕлĕххисем—236, 10-шар пин тенкĕлĕххисем — 590 выигрыш.

Вылăв Мускавра «Серп и Молот» завод клубĕнче пулса иртет, сентябрĕн 8-мĕшĕнче пуçланать те сентябрĕн 9-мĕшĕнче пĕтет.

(ТАСС).

ÇУРКУННЕН ТУЙĂНМАСТЬ-И СИРЕ?

Тăвансем! Пилĕк-çурăм тӳрлентĕр:
Кĕтсе илтĕмĕр каннĕ ирĕ.
Саралса çывхараç кĕркуннемĕр
Çуркуннен туйăнмасть-и сирĕ?

Çулçăсем савăнса çатăл-çатăл
Алă çупнă пек мар-и пăхсан?
Кĕрхилле хумханан тăван Атăл
Тăрăлса йăл кулмасть-и паян?

Пĕр-пĕрне тинкерсе сăнасамăр —
Мĕн тери ăрăскал пит-куçра!
Паянхи туйăма, саманамăр,
Çуралас ĕмĕрсемшĕн усра.

Портретĕм çинелле пăхăр халĕ:
Чĕрĕлмен-и пуç хунă салтак?
Шухăшпа шуралса пыран Сталин
Çамрăкланнă пек мар-и пăртак?

Иксĕлми чĕрĕлӳ пархатарĕ
Час сыватĕ çĕршыв суранне.
Ĕмĕте юрăпа янратар-и,
Кайтăр юрă тĕнчен çур анне!

Петĕр ХУЗАНГАЙ.

Куллен кирлĕ тава сем туса кăларас ĕçе вăйлатасси

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ промысла кооперацийĕпе инвалидсен кооперацийĕн предприятийĕсенче куллен кирлĕ таварсем тата апат-çимĕç туса кăларас ĕçе вăйлатмалли мероприятисем çинчен постановлени йышăннă.

СССР Совнаркомĕ çакна палăртнă: вырăнти промышленноçăн, промысла кооперацийĕн тата инвалидсен кооперацийĕн предприятийĕсенче вырăнти чĕртаварсемпе отходсенчен куллен кирлĕ таварсем тата апат-çимĕç туса кăларас ĕçе ӳстересси—совет организацийĕсен чи кирлĕ задачи пулса тăрать. Союзлă промышленноçпа союзлă республикăсенчи промышленность предприятийĕсен директорĕсем куллен кирлĕ таварсем туса кăларма юрăхлă отходсене вырăнти промышленноçăн, промысла кооперацийĕн тата инвалидсен кооперацийĕн предприятийĕсене пама тивĕçлĕ.

Союзлă промышленноçпа союзлă республикăсенчи промышленность предприятийĕсем хăйсен производствинче пулакан отходсенчен вырăнти промышленноçпа промкооперацин тата инвалидсен кооперацийĕн предприятийĕсем валли çурма-фабрикатсем хатĕрлесе пама пултараççĕ; çав çурма-фабрикатсенчен тунă япаласен 50 процентне вĕсем хăйсен ОРС-ĕсенче сутмашкăн каялла илме тивĕçлĕ.

Вырăнти промышленность предприятийĕсем тата промысла кооперацийĕн предприятийĕсем туса кăларакан металăн тата металл прокачĕн 75 процентчĕпе союзлă республикăсен Совнаркомĕсем вырăнти промышленноçăн, промысла кооперацийĕн тата пурăнмалли çуртйĕрсемпе коммуналлă хуçалăхăн нушисене тивĕçтернĕ çĕрте усă курма пултараççĕ, çав металл вара централизованно валеçмелли плана кĕмест.

Союзлă республикăсен Совнаркомĕсене вырăнти промышленноçăн, промысла кооперацийĕн тата инвалидсен кооперацийĕн системинче çĕрмамăкĕ арласа хатĕрлес, йĕтĕн сӳсне тирпейлес, резинăран подошсем туса кăларас ĕçе йĕркелесе вăйлатса яма хушнă.

Вырăнти промышленность предприятийĕсем, промысла кооперацийĕпе инвалидсен кооперацийĕн предприятийĕсем туса кăларакан урапасемпе çунасене, сĕтел-пукансене, катка-пичĕсене, вĕренпăвсене, ут таврашĕсене, кирпĕче, извеçе, пурна алебастра тата черепицăна вырăнтах валеçмелле пулать. Куллен кирлĕ таварсене чи лайăх туса кăларнăшăн 1-мĕш, 2-мĕш тата 3-мĕш степеньлĕ дипломсем памалла тунă.

Дипломсемпе наградӑланă предприятисене, артельсене, мастерскойсемпе артельсене çулсерен укçан премби памалла тунă. Дипломсемпе наградӑланă инженерсемпе техниксене уйăхсерен оклад çумне ĕçукçи хушса параççĕ.

Ялпо ĕçĕнчи çитмĕнлĕхсене палăртрĕç

СĔНТĔРВĂРРИ. Районри пур ялпосенче те отчетлă пухусем пулса иртеççĕ. Çак кунсенче Шуркассинчи ялпо членĕсен пухăвĕнче отчет туса пачĕ. Ялпо правленийĕпе ревизи комиссийĕн отчечĕсем хыççăн 11 çын тухса калаçрĕç. Тухса калаçакансем ялпо ĕçне хытă критиклерĕç.

Ялпо правленийĕн çавăрăнăçусăрлăхне тата ĕç çине ответсăрла пăхнине пула, ялпо лавккинче тыпрул пухса кĕртнĕ çĕрте кирлĕ пулакан таварсене сутассин организацилемен, служащисемпе учительсене продуктăсем вăхăтра парса тăмаççĕ.

Хăшпĕр çĕрте сутмалли таварсене хăйсен кăсъине чикни те, растрата тунă те пулнă. Ольтикассинчи лавкара ĕçлекен Кожевников ялпо укçине 4.000 тенкĕ салатса яна. Ялпо правленийĕн председателĕ Куприянов юлташ çакăн çинчен пĕлнĕ пулин те нимĕн те туман.

Ялпора ĕçлекенсем хушшинче ĕç дисциплини начар. Лавкасем эрни-эрнипе хупă лараççĕ.

Ялпо членĕсем пĕр сасăлла пулса, Куприянов юлташа правлени председателĕнчен кăларчĕç, ун вырăнне Хĕрлĕ Çартан тавăннă Д. Матросов юлташа суйлаçĕ.

С. СЕЛЕЗНЕВ,
Ф. ИЛЬИН.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи государство департаменчĕ японецсем тыткăнри американецсене тискеррĕн тытса усрани çинчен калани

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). США-н государство департаменчĕ 19 нота пичетлесе кăларнă. Çав нотăсене Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви юлташки икĕ çул хушшинче Швейцари правительстви урлă Японйе ярса панă пулнă. Нотăсенче Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви японецсем тыкăна лекнĕ американецсене тискеррĕн тытса усранине хирĕç протест панă, японецсем тыткăнри американецсене тискеррĕн тытса усранине фактсемпе çирĕплетсе кăтартнă.

Государство департаменчĕ çапла пĕлтернĕ: вăрçă пуçланнăранпа çавăн пек нотăсене пĕтĕмпе 240 яхăн янă, анчах та иртнĕ çулхи январь уйăхĕнчен пуçласа бĕсем çинчен пĕлтермен, мĕншĕн тесен японецсем çапла каласа панăччĕ: çав нотăсене пичетлесе кăларни тыткăнри американецсен пурнăçне татах та йывăрлатма тата вĕсене американецсем патне тыткăна лекнĕ японецсемпе улăштарас ĕçе пăсса яма кăна пултарать.

Паян пичетлесе кăларнă материалсем çинчен государство секретарĕ Бирнс ĕнерхи пресс-конференцире çапла каланă: Японире те, Европăри пекех, вăрçă пресступникĕсене ответ тыттарас ĕçе пуçласа ямалла.

Государство департаменчĕн паянхи пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: тивĕçлĕ власссем японецсен тискер ĕçĕсене тата вĕсем тыткăна лекнĕ çар сыннисене пăхса усрасси çинчен Женевăра йышăннă конвенцине пĕтĕм тĕнчери законсене пăснине тĕрлес ыйтăва пăхса тухĕç. Кăçалхи майăн 19-мĕшĕнче янă нотăра государство департаменчĕ японецсен 50 хуралçине айăплана. Çав хуралçăсем, сывлăшран, тапăннă вăхăтра Филиппин утравĕсен шутне кĕрекен Палау утравĕ çинчи принцесса Пуэрто ятлă лагерьте тыткăнри американецсем кĕрсе пытаннă бомбоубежищăна бензин сапса тивертнĕ янă. Кунта вара вĕсем тыткăнри 150 американеца вĕлернĕ. Иртнĕ çулхи август уйăхĕнче янă нотăра государство департаменчĕ çапла пĕлтернĕ: японецсем американецсен летчикне, Çĕнĕ Гвинейăри Айтапе çывăхне парашютпа аннăскере, тискеррĕн асапалантарса пуçне татса вĕлернĕ.

Нотăсенче çавăн пекех тата тыткăнри çынсене питĕ начар апат çитернине, медицина тĕлĕшĕнчен пулăшу паманнине, çав тери йывăр ĕçлеттернине, кунсăр пуçне тата тыткăнри çынсем пурăнакан лагерьсене нейтралнăй çĕршывсен представителĕсене кĕртменнине хирĕç протест тунă.

ЮГОСЛАВИРИ ХАЛĂХ ФРОНЧĔН ИСПОЛКОМĔН ЛАРĂВĔ

БЕЛГРАД, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Югославири халăх фрончĕн исполкомĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура учредительнăй пухăва суйлас тата халăх фрончĕн кандидачĕсене палăртас ыйтăва сӳтсеянă. Ку тĕлĕшпе халăх фронтне кĕрекен политикăллă пур группăсем те, пĕтĕмĕшпе илсен, калаçса татăлнă. Исполком суйлав кампанине ирттермелли плана туса йышăннă. Суйлав кампанине хатĕрленес тата ертсе пырас ыйтăва халăх фрончĕн вырăнти исполкомĕсен аллине панă. Халăх фрончĕн вырăнти исполкомĕсен суйлав агитацине ертсе пымалла, суйлав умĕнхи пухусене организацилесе туса ирттермелле.

Çавăн пекех тата исполком çапла йышăннă: суйлав кампанине ирттернĕ чух халăх фрончĕн вырăнти исполкомĕсенче тавлашуллă ыйтусем пулсан, вĕсене вара çав организацисен вырăнти комитечĕсемех татса памалла.

Çав кунсенчех халăх фрончĕ суйлавçăсене хăйĕн суйлав программине калаçа парать. Унта политикăллă ыйтусем çине халăх фрончĕ мĕнле пăхни çинчен ăнлантарса памалла.

ИРАНРИ ХУЛАСЕНЧЕ СЕИДОВЕЦСЕМ ДЕМОКРАТЛЛĔ ОРГАНИЗАЦИСЕНЕ ТАПĂННИ

ТЕГЕРАН, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Иранри Сари, Баболе тата Кяранде хулисенче (Керманшах çывăхĕнче) демократиллĕ организацисене тапăнă. Çавна пула халăх партийĕн Мезендеранри область комитечĕ «Недае хакикат» уçаратра спецыальнăй чĕнсе калаçнине пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: меджлис депутачĕ Эсфендиари заговор хатĕрленни çинчен правительствăна пĕлтернĕ пулнă. Çавăн пекех Эсфендиари сеидовецсен хĕспăшаллă бандисене пулăшнине те правительство пĕлнĕ. Полицине жандармери хĕспăшаллă бандăсене чарас вырăнне вĕсене пулăшса пынă. Çак ирсĕр ĕç Шахи хулинче пуçланнă. Сеидовецсен хĕспăшаллă отрячĕсем Шахири рабочисем пурăнакан Торкмахали районне тапăннă. Анчах та рабочисем хирĕç тăнипе пула бандитсем саланса кайнă. Çакăнта тапăннă чухне халăх партийĕн членĕсем 5 çын аманнă, 5 çын вилнĕ. Çав кунах сеидовецсен «Ватан» партийĕнчи бандичĕсем Сари хулинчи халăх партийĕн клубне тапăннă, клубра пулнă рабочисемпе клуб сотрудникĕсене хĕнесе хăварнă, клуб пурлăхне çаратса тухса кайнă. Ирхине Шахи хулинчен рабочисене пулăшма рабочисем ушкăнĕ пынă, анчах та жандармери вĕсене клуба хупса хупăрласа пиллĕ, çав вăхăтра вара сеидовецсем клубăн мĕнпур кантăкĕсене çĕмĕрсе тухнă. Çакăнта халăх партийĕн пĕр членне вĕлернĕ тата темиçе çынна амантнă.

Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Баболере тапăнассине те питĕ тĕплĕн хатĕрленĕ. Кунта рабочисене тапăнас ĕçе Халасбери адвокат ертсе пынă. Рабочисене тапăнас умĕн Баболе губернаторне вырăнтан кăларнă пулнă. Малтан жандармери, полици тата хĕспăшаллăпа сеидовецсем, хĕспăшаллăсем уçă курса, халăх партийĕн клубне пухăннă рабочисемпе хресченсене хăваласа салатнă та, унтан вара клуба çаратнă. Хаçат çакна палăртать: Баболе хулинче рабочисене тапăнас ĕçе полицине жандармери раснах активлăн пулăшса пынă. Кунта бандитсене уççăнах пулăшу панă. Çак заговорсене полици начальникĕ Мазандера хăй те хутшăннă, тесе çирĕплетсе калать хаçат. Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çав кунах Кяранде хулинче те халăх партийĕн клубне тапăнса çаратнă. Унта та вилнисемпе аманнисем пур.

ТЕГЕРАН, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Эстеланд» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Шахипе Сари хулисенче рабочисене тапăннин, хирĕç протест туса çав хуласенчи нумай рабочисем забастовка пуçласа янă.

МОНАРХИСТЛА-ФАШИСТЛА БАНДĂСЕН ЭГЕЙ МАКЕДОНИЙĔНЧИ ТЕРРОРНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕСЕ ТУНĂ МИТИНГ

БЕЛГРАД, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Югославири радио çапла пĕлтерет: Эгей Македонийĕнчен Битоль хулине тарса килнĕ çынсем, Эгей Македонийĕнчи монархистла-фашистла террора хирĕç протестлесе, митинг туса ирттернĕ. Митингри çынсем Тито маршала телеграмма янă. Унта çапла каланă:

Эпир, Эгей Македонийĕнчен тарса килнĕ темиçе пин çын Вардар хĕрринчи македонецсен тата ытти славян халăхĕсен тăванĕсем пулса тăратпăр. Ытти халăхсем хăйсем çĕнтерсе илнипе усă кураççĕ пулсан, Эгей Македонийĕнче пурăнакан македонецсем фашистла йыткĕтĕвĕсен калама çук хаяр террорĕнчен асап курса пурăнаççĕ. Çав йыткĕтĕвĕсем пирĕн халăха тата пирĕн пурлăха пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пыраççĕ.

Митингри çынсем Англин, Совет Союзĕн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствисене те телеграмма янă. Вĕсем унта аслă союзниксен правительствисенчен Грецири монархиста-фашистла бандăсен ĕçне, Македони халăхне кунран кун ытларах та ытларах хĕсĕрлекен бандăсен ĕçне пĕтерсе лартма ыйтаççĕ. Эпир нацн ыйтăвĕпе политика ыйтăвне тĕрĕс татса пама, вĕсене пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ принципсем тăрăх татса пама, вак халăхсен интересĕсене хӳтĕлемелле туса татса пама ыйтатпăр, тенĕ.

ГИТЛЕР МĔН ЧУХЛĔ УКÇА ИЛСЕ ПУРĂННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен Германири çар администрацийĕн финанс пайĕ Гитлер мĕн чухлĕ укçа илсе пурăнни çинчен калакан материалсене пичетлесе кăларнă. Германин государство бюджечĕн материалĕсем тăрăх, Гитлер 1942 çулта хыснаран 26 миллион марка илнĕ. Çак 26 миллион маркăна вăл çакăн пек статьясем тăрăх илнĕ: Гитлерăн шалу укçи—уйăхне 56 пин марка; «государство пуçлăхĕ» пулнăшăн—çулталăкне 1 миллион марка тата рейхсканцлершăн «тĕрлĕ тăкаксем валли» — çулталăкне 24 миллион марка.

Паллă ĕнтĕ, Гитлер влаçа тытса илнĕренне те Германи бюджетне пичетлесе кăларман, çавăнпа та нимĕçсем «фюрер» мĕн чухлĕ тăнине пĕлмен.

ДАМАСКИНОС АРХИЕПИСКОП АНГЛИЕ ПЫНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 6-мĕшĕнче Грени регенчĕ Дамаскинос архиепископ Англие çитнĕ.

ИРАН МЕДЖЛИСĔ ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН УСТАВНЕ ÇИРĔПЛЕТНĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 4-мĕшĕнче Иран медлисĕ пурте пĕр саспа Пĕрлешнĕ нацисен уставне çирĕплетнĕ.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Михаил Данилович **Егоров** юлташа Чăваш АССР-ĕн Вырăнти промышленность Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

Редакцирен

Августăн 29-мĕшĕнче пирĕн хаçатра М. Чакаковăн «Мĕншĕн колхоз юлса пырать?» ятлă заметки пичетленсе тухнăччĕ. ВКП(б) Первомайски райкомĕ пĕлтернĕ тăрăх, М. Чакаков заметкăра кăтартнă фактсем тĕрĕс пулман. Ленин ячĕпе тăракан колхоз тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас енĕпе лайăх ĕçлекен колхозсенчен пĕри. Тĕрĕс мар çырнăшăн Чакаков юлташа ятланă.

Ответлă редактор
В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, пухусăлăх пайĕн—3-99, рабселькоровсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-[illegible]

НТ 03634. Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. о. [illegible]. 42 л. п.